Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* 112 N (4681) *1998 çулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 3-мĕшĕ, шăматкун* *Палăртнă хакпа.*

# Пĕтĕм Раççейри хирĕçлев акцийĕ: забастовка тумалла е çук?

**Вăхăт паллисем**

Иртнĕ юнкун район администрацийĕнче промышленность предприятийĕсен ертӳçисем тата хулари профсоюз активĕ канашлăва пуçтарăнчĕç, унта 1998 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейре хирĕçлев акцине ирттерме пĕлтернине хулари ĕç коллективĕсем мĕнле йышăннине сӳтсе яврĕç. Шухăшсемпе улшăнасси агропромышленность комплексĕн ĕçченĕсен профсоюзĕсен районти комитечĕн председателĕ, çав вăхăтрах хулари тата районти профсоюзсен координациллĕ совечĕн председателĕ **Г.К.Пакшин** пуçтараннисене Раççейри Профсоюзсен никама пăхăнман Федерацийĕн Генеральнăй Совечĕ профсоюзсен членĕсене, мĕнпур ĕçченсене чĕнсе каланипе паллаштарнинчен пуçланчĕ. Унăн содержанийĕ, тӳрех калатпăр, питĕ çирĕп, çӳлерехрисем экономикăна йĕркелесе яма шантарни ĕмĕтре çеç пулнине палăртнă. Çакăнпа пĕрлех ФНПР Генсовечĕ Раççей Федерацийĕн Президентне Б.Н.Ельцина хăйĕн ирĕкĕпе вырăнтан тухма ыйтнине вуласа пачĕ. Икĕ документа та 1998 çулхи августăн 27-мĕшĕнче йышăннă, анчах та вĕсенчен пĕрремĕшĕнче хăнăхнă "юлташсем" сăмахран тытăннă, иккĕмĕшĕнче вара çапла çырнă: "Господин президент..." Çавăнпа пĕрлех, калаçу тӳрех вырăнти ĕçсем çине куçрĕ. Агропромышленность комплексĕнчи профсоюзсенчи лару-тăрăва тишкерсе тухса, Г.К.Пакшин предприятисенчен чылайăшĕ çулсерен коллективлă договорсем йышăнни, анчах та правилăсене пăснине яланах пĕтĕмлетменнине палăртрĕ. Коллективлă договор - ку ертӳçĕсемшĕн ытлашши ĕç пулни паллă ĕнтĕ, анчах та предприяти пурнăçлама пултарайман çăмăллăхсене договора кĕртме мĕншĕн килĕшеççĕ-ши? "Профсоюзсем çинчен" калакан закона пăсса хуçалăх ертӳçисем тытса юлнă взноссене профсоюза куçармаççĕ. Çапла майпа, пысăк парăм пуçтарăннă. Профсоюз касси вара пушă. Ахаль çынсен кĕсйисем те пушах. Çапла, Г.К.Пакшин сăмахĕсем тăрăх, "Татсельхозмонтажăн" куçса çӳрекен механизациленĕ колонни иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕнчен пех ĕç укçи тӳлемен, 1-мĕш номерлĕ куçса çӳрекен механизациленĕ колонна тата "Сельхозэнерго" декабрь уйăхĕнчеппе, сельхозтехника - 1998 çулхи январь уйăхĕнчеппе, 127-мĕш номерлĕ куçса çӳрекен механизациленĕ колонна - май уйăхĕнчеппе тата ыттисем те.

Район прокурорĕ **А.П.Евграфов** хăйĕн калаçăвне профсоюз активне ыйту панинчен пуçларĕ: "Ĕç укçине паян кăна пама чарăнман вĕт, профсоюз органĕсем маларах ăçта пулнă? Ĕçри ыйтусем тĕлĕшпе ĕçлекен комисси мĕншĕн йăшăлтатмасть?" Забастовка юлашки хатĕр пек палăртса, прокурор митингсем ирттермелли, урамра халăх ушкăнпа пухăнмалли йĕрке çинчен ăнлантарса пачĕ. Ку тĕлĕшпе законра палăртни пур. Хула тата район администрацине ку ĕçсем тĕлĕшпе заявлени килменни те палăрчĕ. Сроксем иртсе кайнă, апла пулсан, ыйту та кун йĕркинчен тухать. Ĕç укçи паманни тĕлĕшпе прокуратура 42 пин тенкĕлĕх тавăç пуçарнă - çынсем закон пулăшасса кĕтеççĕ. Районти вăрçă тата ĕç ветеранĕсен Совечĕн председателĕ **И.У.Гилязев** тата хулари тата районти социаллă пурнăç лару-тăрăвне хĕсмелле маррине палăртрĕ. Пенсионерсемпе калаçнă чухне вĕсен хăш-пĕр ыйтăвĕсем çине хуравлама питĕ йывăррине те палăртса хăварчĕ вăл. Вĕсем çакăн пек ыйтусем параççĕ: икĕ хутлă питĕ лайăх уйрăм çуртсем мĕнпе тăваççĕ? е ертӳçĕн ĕç укçипе ăна пăхăнса тăракан илекен ĕç укçин калăпăшĕн уйрăмлăхĕ мĕншĕн çав тери пысăк? Ĕç укçипе пенсие вăхăтлă паманни çынсен кăмăлĕсенче начар енчен палăрать. "Татсельхозмонтажăн" куçса çӳрекен механизациленĕ колоннин профсоюз комитечĕн председателĕ **А.И.Савинов** канашлăва пухнин сăлтавĕ иккĕлентерни çинчен каласа район администрацине коллектива ĕç укçи парас тĕлĕшпе кĕнĕ парăма татассипе çыхăннă ыйтăва татса пама пулăшма ыйтрĕ. "Нурлатнефть" НГДУ профсоюз комитечĕн председателĕ **О.Н.Лизунов** октябрĕн 7-мĕшне планланă хирĕçлев акцине мĕнле йышăннине уççăн, ăнланмалла каларĕ. Предприятире ун тĕлне юлашки икĕ уйăх хушши хатĕрленеççĕ. "Татнефть" АО профсоюз комитечĕн решенийĕпе нефть кăларакансем политика требованийĕсене пăрахăçланă та урăххи çинче чарăннă: ĕç укçин тата ĕç вырăнĕн ыйтăвĕсем.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

# Октябрĕн 4-мĕшĕ - Учительсен кунĕ!

## Саламлă телеграмма

*Пирĕн хаклă учительсем!*

*Сирĕншĕн çак савăнăçлă кун эпĕ Сире Учительсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Сирĕн йывăр та яваплă ĕçĕрте иксĕлми вăй-хăват та та çĕнĕ ăнăçлăхсем, çирĕп сывлăх, телей, тăнăçлăх сунатăп.*

**Сире хисеплесе А.К.Хамаев, Раççей Федерацийĕн ФС Патшалăх Думин депутачĕ.**



*Светлана Владимировна Андреева Вăтам Хăмăшлăри шкул çулне çитмен ачасен вĕрентӳ учрежденийĕнче 17 çул ĕçлет ĕнтĕ, вĕсенчен 8 çулне - заведующи пулса. Вăл сăпайлă, хăйĕн ĕçне пĕлекен, педагогика ăсталăхне ӳстерес енĕпе тăтăшах ĕçлекен ертӳçĕ. Светлана Владимировна ачасене мĕнпур енчен аталантарас тĕлĕшпе условисем тума майсем тупать, коллектив ĕçне çĕнĕ технологисем кĕртсе "Ача садĕнче вĕрентмелли тата воспитани памалли программăсене" пурнăçлассине тĕпе хурать. Учреждени мĕнпур пӳлĕмĕнче хăтлă, вĕсенче ачасене интереслĕ те хаваслă. Вĕсене капăрлатма прикладной искусствăпа усă кураççĕ, пĕчĕк музей йĕркеленĕ. Ачасем валли вылямалли тата ĕçлемелли вырăнсене интереслĕ оборудованиленĕ. Кашни çулах кунта пахча çимĕç, улма-çырла пухса илеççĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленессипе ирттернĕ конкурс итогĕсемпĕ çак учреждени кашни çул малти вырăнсене йышăнать.*

*Çак ӳкерчĕкре эсир ТР вĕрентӳ министрĕ Ф.Ф.Харисов Светлана Владимировнана нумай çул хушши тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Хисеп грамоти панине куратăр.*

# Октябрĕн 5-мĕшĕнче Тутарстанти уголовнăй розыск 80 çул тултарать

## Малти ретре

### "Аристократсем"

Виçĕ кивĕ сĕтел тата вĕсен çумĕнчи тĕреклĕ тенкелсем лартнă çак пӳлĕмри чи паллă та хаклă япала пысăк тимĕр сейф, 60-мĕш çулсенче туса кăларнăскер, шутланать. Ун çинче "Серенада", ку хăçанхине калама та хĕн (хăçан-тăр çакăн пек радиоприемниксем пурччĕ). Хаклă япала çак пӳлĕмре урăх çук пулас. Малти кĕтесри шкап çинче пуç шăмми, пĕлетĕр ĕнтĕ, шкулта биологи пӳлĕмĕсенче вĕсем пур, анчах та кун айне çапла çырса хунă: "Кунта кĕриччен малтан лайăх шутласа пăх..." Феликс Эдмундович портречĕ айĕнче, пăта çине çакнăскерте, шурă хутран туса хатĕрленĕ илемлĕ пĕчĕк карçинкка, ун çине кивĕ çĕр тенкĕлĕх укçа çыпăçтарнă,варрине трафаретпа çапла çырнă: "Взя-ткăсен кунĕ". Аялтан палăрмаллах туртса хунă, маччаран тенĕ пекех куçса çӳрекен хĕрлĕ вымпел çакса хунă...

Милицири ытти нихăш пайра та çакăн пек "картина" тума пултараймаççĕ, уголовнăй розыск вара пултарать, мĕншĕн тесен "оперсем" - урăх, уйрăм халăх. Вĕсем каланă тăрăх, уголовнăй розыска ĕлĕкренех милицин "шурă шăмми" тесе шутланă. Кун пеккине мана пĕрремĕш хут илтме тӳр килчĕ. Мĕншĕн-ха "шурă шăмă"? Кунта тӳр пилĕксем вăрах вăхăт тытăнса тăрайман. Пăх-ха вĕсене - "аристократсем"! Ĕмĕчĕ те вĕсен пысăк: вĕсен ыттисенни пекех çĕнĕ, чаплă çурт пулĕ.

### Çын пуçне çичĕ пин ытла

Çук, ют çĕршыв валюти çине куçарнă ĕç укçи мар (уголовнăй розыск начальникĕн вăл çĕннипе 700 тенке яхăн çеç). Ку эпир, халăх, уголовнăй розыскăн пĕр ĕçченĕ çине куçарса шутласан. Саккăрăшĕнчен кашнин хăйĕн палăртнă зони (хăраса ан ӳкĕр, кăна калама çеç çапла калаççĕ). "Оперсен" задачи - мĕн те пулин пулсан хăйĕн зонине пĕрремĕшĕ çитмелле: каçхине-и, ирхине-и, шăрăх-и, шартлама сивĕ-и, çемье уявĕ-и... Мĕн тăвăн ĕнтĕ, милици ĕçченĕсемшĕн уявсем çук, кану кунĕсем те сахал лекеççĕ. Зонăсем çывăрмаççĕ вĕт.

### Уйрăм, процентсем пар!

Статистика милици ĕçченĕсене çине тăрса ĕçлеме хистет, ăна ыйтсах тăраççĕ. Уголовнăй розыскăн задачи уголовнăй йывăр преступленисемпе кĕрешесси пулнă май, ăна пăхса тухар-ха.

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).

# Уяв ячĕпе Сире, хисеплĕ учительсем!

## Çулсем иртнĕ хыççăнхи тĕлпулу...


Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕ.

*Ӳкерчĕкре эсир пĕр курсра вĕреннĕ Альфия Хаметзяновна Хамитовапа Фоат Галиуллович Галиуллина куратăр. Хальхи вăхăтра Фоат Галимуллович - ученăй-филолог, вăл Хусанти патшалăх педагогика университетĕнче вĕрентет, учитель-методист Альфия Хаметзяновна - Кислеври вăтам шкулта тутар чĕлхипе литературине. Вĕсем писательсен ушкăнĕ Кислеври шкула килнĕ вăхăтра тĕл пулнă та хăйсен малтанхи юлташĕсене аса илнĕ: сăмахран, Нафиса Тагировна Тухватуллина Тури Нурлатри вăтам шкулта тутар чĕлхипе литературине вĕрентет, Флера Шигаповна Мусина - Çĕнĕ Иглаелĕнчи шкулта. Иккĕшĕ те ертсе пыракан учитель ята тивĕç пулнă.*

*Чылай çулсем иртнĕ хыççăн тĕл пулса, пĕр класра вĕреннисем çинчен çакăн пек ырă хыпар илтни Фоат Галимулловича питĕ савăнтарнă. Телевизорпа ирхине кăтартакан "Чулпан" передачăра та вăл иртнĕ эрнере хăй курнине илтни çинчен каласа панă.*

## Мана вĕрентнĕ учительсем

Эпĕ тăван енре пулманни нумай пулать ĕнтĕ. Тăван ен, юлташсем, шкул асра кăна юлнă. Манăн учительсем питĕ лайăх çынсемччĕ. Пĕрремĕш учительница - Александра Даниловна Миронова (йывăр тăпри çăмăл пултăр), ун хыççăн класс руководителĕ пулса Клавдия Ивановна Рыжова 6 çул ĕçлерĕ. Мана çакăн пек лайăх çынсем вĕрентрĕç: В.Ф.Филимонов, З.Ф.Друженькова, Н.И.Фомина, З.Ф.Силаева, Э.Г.Зиганшин, А.Ф.Каргина, В.И.Павлов, Н.И.Кутузов, Ф.Х.Зимагулов, Н.Л.Макеев, С.Г.Копанева, В.И.Глухов, А.А.Брагазина, П.И.Жемков, З.М.Самойлова, З.Г.Апышкова, В.Е.Ефимов тата, паллах ĕнтĕ, аслă классенче пирĕн класс руководителĕ пулнă Александра Михайловна Кистенева.

Пурнăçра тĕрли пулнă, анчах та хамăн учительсене çаплах калас килет: "Эсир пире вĕрентнĕ пек закона пăхăнса, тӳрĕ кăмăлпа пурăнатăп. Сире пурне те пĕлӳ, ăс панăшăн питĕ пысăк тав".

Шкулта вĕрентекен учительсен ĕçĕ питĕ кирлĕ тата йывăр, кунта ыркăмăллăх, чăтăмлăх, профессие парăнни, ачасене юратни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Вĕренекенсен ăнăçлăхĕ чи малтан учительрен килнине эпĕ шанатăп.

Манпа пĕр класра вĕреннĕ Вера Галиуллинапа Володя Севостьянов та çак яваплă профессие суйласа илчĕç.

Учительсене пурне те професси уявĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп! Ан тив, эсир вĕрентнĕ ачасем яланах сире тав туса асă илччĕр!

**Р.МУРЗАХАНОВ,**
**Пушкăртстан.**
**Мелеуз хули.**

## Шкул директорĕ

Пирĕн ял çинчен питĕ сахал пĕлеççĕ. Унăн историйĕ, ырăнĕсем вара питĕ илемлĕ. Çыннисем тата. Пур çĕрти пекех - вĕсем тĕрлĕ. Ăслисем тата ăслах маррисем, йĕркеллисем тата йĕркесĕррисем. Халь вара эпир Лидия Яковлевна Амукова çинчен каласа парас тетпĕр. Вăл хăй кунтисемех, рабочи çемйинче çуралса ӳснĕ. Шкултан медальпе вĕренсе тухнă, кайран вара Хусанти пединститутра вĕреннĕ. Ăна аспирантура хăварнă пулин те, вăл тăван шкула таврăннă. Ку унăн ĕçĕ пулнă. Учитель, завуч, директор. Унăн учитель стажĕ 25 çул шутланать, директор пулса вара 17-мĕш çул ĕçлет. Унăн тав çырăвĕсем, грамотăсем пур, çаплах "Çутĕç отличникĕ", учитель-методист ята тивĕç пулнă. Анчах та кун çинчен пурте пĕлмеççĕ. Пĕлсен те учительсем кăна, вĕсем те пурте мар. Вăл хăйĕн çинчен каласма, хăйне палăртма юратмасть. Ĕç унсăр та çителĕклĕ. Эпир "цивилизацирен" аякра пурăнатпăр. Шкул директорне, тата хĕрарăма вара пур çĕре те ĕлкĕрме, пурне те асăрхама питĕ йывăр. Вăл отпускра пулать-и? Эпир ăна ялан шкулта куратпăр. Унăн ĕçĕ нумай, вăхăчĕ çук пулин те, кирлĕ пулсан вара яланах пулăшма хатĕр. Пирĕн ачасем каланă тăрăх, вăл питĕ лайăх учитель, ăна учитель пулма Турă хушнă пулĕ. Вăл вĕрентекен Таня Казаковапа Лена Буянцова математикăпа иртterекен районти олимпиадăсенче 5-мĕш вырăнсене йышăннă. Вăл вĕрентсе кăларнă ачасенчен виççĕшĕ - Н.Н.Ямкина, О.А.Гаврилова, Н.Л.Сазонова математика учителĕсем пулса ĕçлеççĕ. Пирĕн шкулта ачасене çирĕп пĕлӳ параççĕ, çавăнпа та вĕсенчен чылайăшĕ институтсене вĕренме кĕреççĕ. Юлашки çулсенче шкултан медальсемпе вĕренсе тухнă пилĕк ачана илер. Людмила Амукова Ульяновск университечĕн Димитровград хулинчи филиалне вĕренсе пĕтерет. Таня Казакова Хусанти техника университетĕнче вĕренет. Надя Гаврилова ял хуçалăх техникумне пĕтерет, Лена Буянцовапа Наташа Амукова Димитровградри технологи институтне вĕренме кĕнĕ. Шкулта иккĕмĕш çул ĕнтĕ тутар чĕлхи вĕрентеççĕ - кама та пулин кунта ĕçлеме килме килĕшме каластарма питĕ йывăр. Мĕншĕн тесен пирĕн ял район центрĕнчен инçетре вырнаçнă. Ыттисем çинчен те чылай çырма пулать.

Пирĕн ялти тивĕçлĕ çынсем çинчен каласа памалли майсем тата пулĕç тесе шутлатпăр. Халлĕхе вара хаçат урлă эпир директора тата шкул коллективне пирĕн ачасене тарăн пĕлӳ панăшăн, халь эпир хамăрăн ачасемпе мăнкăмăлланма пултарнăшăн тав тăватпăр.

**Ашшĕ-амăшĕсем: Т.БУЯНЦОВА, Н.КАЗАКОВА, А.КАЗАКОВ, К.ГАВРИЛОВА тата ыттисем.**
**Тăмпа ялĕ.**



**Гайтан ялĕнчи шкулта хăйсен патĕнче çакăн пек ăслă та пултаруллă педагог, Никонор Николаевич Калугин ĕçленипе мăнкăмăлланаççĕ. Питĕ лайăх ӳкерме, йывăçран тата ытти материалтан тĕрлĕ вактĕвек япаласем тума пĕлнĕ май вăл шкулта рисовани, черчени, пурнăç хăрушсăрлăхĕн никĕсĕсен урокĕсене, çаплах пăшалпа пеме вĕрентекен кружок ертсе пырать. Малах Виктор Николаевич Пӳлеркӳлĕнчи шкулта пуçламăш çар хатĕрленĕвĕн урокĕсене илсе пынă, çавăнпа та кружока ертсе пырасси ăна килĕшет. Вăтăр çул стажлă учитель-методиста ачасем те питĕ юратаççĕ, вăл йĕркеленĕ класс тулашĕнчи мероприятисене хапăлласах хутшăнаççĕ. Пĕрле хатĕрленĕ ĕçсене районти выставкăра та кăтартнă. Пирĕн фотокорреспондент Н.Азизов вĕсене çав самантра ӳкерсе илнĕ.**

## Пĕтĕм Раççейри хирĕçлев акцийĕ: забастовка тумалла е çук?

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

НГДУ цехĕнче пĕрлехи пухусем иртнĕ, каярах профсоюзсен конференцийĕ пулнă, пĕрлешӳ ертӳçисем патне çырнă экономика требованийĕсемлĕ çырăва пин çурă рабочи алă пуснă. Октябрĕн 7-мĕшĕнче НГДУра ĕçе 1 сехетлĕхе чарма планлаççĕ. Бюджета çирĕплетекен çак пысăк предприятире ĕç укçи 4 уйăх тӳлемен, анчах укçасăр расчетпа апат-çимĕç парассине йĕркеленĕ. Апла пулин те ку çивĕч лару-тăрăва сирмест, тесе пĕтĕмлетрĕ **О.Н.Лизунов.** Çул-йĕр шырамалла.

Социаллă хӳтлĕх управленийĕн начальникĕ **Л.Н.Дильмухаметова** пенсисене тӳлес тĕлĕшпе ĕçсене васкавлă лайăхлатасси çинчен каламарĕ - пĕтĕмпех пенси фондне страховка взносĕсем пухăннинчен килет, çапах та август уйăхĕшĕн пенсисен пĕр пайне тӳлени çинчен пĕлтерчĕ, апатçимĕçпе вара пенсионерсене райпо тата ОРСсен магазинĕсенче тивĕçтереççĕ. Ытти ятарлă мерăсем те йышăнаççĕ.

Пĕрлехи калаçу темипе çаплах Нурлатри вăрман хуçалăх директорĕ **Ф.М.Минсалимов** тата администраци пуçлăхĕн социаллă пурнăçпа культура ыйтăвĕсемпе ĕçлекен çумĕ **Н.Х.Абдуллин** малалла калаçрĕç. Н.Х. Абдуллин çакăнтах, пурте пĕрле ĕç коллективĕсем Пĕтĕм Раççейри хирĕçлев акцине хутшăнассипе рекомендацисем йышăнма сĕнчĕ. Хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ **Ю.В.Терентьев** канашлăва пĕтĕмлетсе профсоюз комитечĕн органĕсене ĕçри пысăк çитменлĕхсем тĕлĕшпе критиклерĕ. Тĕслĕхрен, профсоюз комитечĕсенчен пĕри сăмахсăрах килĕшнипе предприяти ертӳçи уйрăм чаплă çурт туса лартнă, унччен пурăннă хваттере приватизациленĕ. Кун пек тĕслĕх пĕрре çеç мар. Çынсем тĕрĕслĕхе тавăрас тесе администрацие çăхавсемпе пыраççĕ, анчах та çакăн пекки çав профсоюз комитечĕн председателĕн куçĕ умĕнчех пулса иртет вĕт. Бюджет укçинчен уйăрса илес требованисем тĕлĕшпе вара - унта илмелли нимĕн те çук. Производство кăтартăвĕсем начарланаççĕ, налуксемпе пенси взносĕсене пухасси лайăхланмасть. Çавăнпа та ĕçлекенсене тата пенсионерсене ĕç укçи параймаççĕ. Апла пулсан, пурнăç условийĕсем начарланаççĕ. Такам килсе пулăшасса шанмалли çук. Вырăнсенчи ĕçсене йĕркелемелле, лайăх результатсем тумалла. Çакăнтах Ю.В.Терентьев предприяти ертӳçисене ӳпкелешсе илчĕ. Çынсемпе ансатрах пулмалла, улпутпа чиновник хăтланавĕсене, коллектив членĕсемпе тата ĕç ветеранĕсемпе хăвна пысăка хурассине манмалла, вăхăт тупса çынна тимлĕ итлеме пĕлмелле, ăна ăнланса май пур таран пулăшма тăрăшмалла. Хулапа районта наци килĕшĕвĕн никĕсне çирĕплетме çакă çеç пулăшĕ.

**Канашлу пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх Пĕтĕм Раççейри хирĕçлев акцийĕ майлă пулма решени йышăнчĕç. Мĕнпур ĕç коллективĕсенче пĕрлехи пухусем ирттермелле, унта пăшăрхантаракан ыйтусене сӳтсе явмалла. Забастовкăсемпе митингсем иртттермелле мар.**

**Т.НАЗАРОВА.**

# Октябрĕн 5-мĕшĕнче Тутарстанти уголовнăй розыск 80 çул тултарать

## Малти ретре

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Иртнĕ 8 уйăх хушшинче ГРОВД тăрăх преступленисене тупса палăртасси 81,3 процент шутланать, танлаштарар: пĕлтĕрхи çак тапхăрта - 77,7 процент. Пĕлтĕр пурĕ 125 йывăр преступлени (вăрлани, ирĕксĕрлесе мăшкăлланни, вĕлерни) тунă пулнă, кăçал вара - 190. ГРОВД начальникĕ В.В.Иванов полковник каланă тăрăх, кăçалхи преступленисен шучĕ (400 яхăн) юлашки çулсенче чи нумаййи. Çакăн пекки, 1993 çулта, ун чухне те кризисчĕ, пулнă. Çав шутра вăрлани преступленисен пĕрре виççĕмĕш пайĕ шутланать. Пур çĕртен те вăрлаççĕ, уйрăмах складсенчен, базăсенчен, хуралламан выльăх-чĕрлĕх фермисенчен, хваттерсенчен. Вăрăсем илме çăмăлрах çĕре пыраççĕ, çавăнпа юлнине пурне те илеççĕ. Нумаях пулмасть иртнĕ ĕç те çакна çирĕплетет. Вăрăсен ушкăнĕ (аслисем тата çула çитмен çамрăксем, пурĕ 4 çын) 2 уйăх хушшинче 18 хут вăрлама ĕлкĕрнĕ. Кунта уйрăмах çула çитмен çамрăксем активлăх кăтартнă, вĕсен юлташĕсем, аслисем ĕçке ярăннă çынсем. Следстви пынă вăхăтра тата çакăн пек факт палăрнă: "ĕçри юлташсем" пĕр-пĕринне вăрлама тытăннă. Ĕçе суда панă.

Кăçал экономика преступленийĕсен пайĕнче те "Сельхозхимире" пысăк суммăлăх вăрланине тупса палăртнă. Çаксем пурте - пĕр-пĕрне çывăх тăракан тĕслĕхсем: çĕршывра кризис пулсан преступлени тăвасси питĕ хăвăрт ӳсет.

Уголовнăй розыск вара, куратора - уголовнăй розыск ĕçĕнче чи пысăк стажлă - 20 çул - криминаллă милици начальникне В.Л.Гаврилова шутласан, шăпах çарти отделени. Кунти составăн çурри "тĕрĕслев иртнĕ", камăн опычĕ тăватă çул, хăшĕн ытларах та, унччен вĕсем, тĕпрен илсен, милицире ĕçленĕ. Кусем Виктор Сиднев (уголовнăй розыск начальникĕ), Игорь Чернов, Рашид Гайфутдинов. Николай Куприянов вара малтан урăх çĕрте ĕçленĕ. Ыттисем - Александр Капитонов, Данис Валеев, Ильназ Гайнутдинов, Анатолий Расчислов - çамрăксем, вĕсем 19-20 çулта çеç-ха, анчах та вĕсен хатĕрленĕвĕ шанчăклă - Елабугăри милици шкулĕ.

### Шкапсенче мундирсем тунсăхлаççĕ...

Оперуполномоченнăй хăйĕн мундирне сайра хутра çеç тăхăнать. Вĕсем ялан тенĕ пекех граждан формипе çӳреççĕ. Кун пек хăть ăçта та кĕрсе кайма пулать, преступник умне те ăнсăртран пырса тăма пултарать тата ытти те. Уголовнăй розыск "пытарнă мула тупмалли" вăйă мар, пурнăçшăн, сывлăхшăн хăрушă служба. Акă преступник ал сăнчăрĕпе ĕнтĕ, анчах та вăл хăйĕн ĕçĕ пĕтнĕ тесе шутламасть-ха. Кунта вара оперативникшăн "тĕркĕш вăхăт" пуçланать. Айăпламалли ĕнентерӳллĕ майсемпе тивĕçтермелле. Çакна вара кашниех пултараймасть. Ĕçченлĕх тата тӳсĕмлĕх - оперативникшăн чи кирлĕ пахалăхсем. Кунта хăвăн милици ĕçне юратни те питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Тӳрĕ кăмăллăх вара кунта уйрăм вырăн йышăнать. Кунта кампа та пулин мар, преступникпа хăйĕнпе тӳрĕ кăмăллă пулмалла, ăна уççăн каластармалли май тупмалла. Хисеплĕ "опер" - ку вăл яланах пултаруллă тата професси тĕлĕшпе ăста çын. Унăн ырă кăмăллă пулма та, çав вăхăтрах çиленме те пĕлмелле. Уголовнăй розыскра чылайăшĕ нумай вăхăт хушши ĕçлеймеççĕ, чăтаймасăр çак ĕçе пăрахаççĕ. Хăшĕпĕрисем, питĕ чăтămлисем çеç юлаççĕ. Пирĕн уголовнăй розыскра та ун пеккисем пур. Кусем вĕсем - М.Изотов, Х.Зарифуллин, В.Иванов, Н.Курбанов, В.Гаврилов, В.Чернышов. Вĕсем шăп кăна çак теветкеллĕ службăра профессионалсем шутланнă тата шутланаççĕ. Халь вара вĕсенчен хăшĕ-пĕри тивĕçлĕ канăва кайнă, хăшĕ вара ГРОВДри ытти службăсене ертсе пыраççĕ. Милицире "шурă шăмă" шутланакана йĕркене тата граждансен лăпкăлăхне сыхлакан ĕçре чи йывăр участоксене шанса пама пулать - вĕсем мундир чысне вараламĕç.

Хисеплĕ ветерансемпе уголовнăй розыскра ĕçлекенсем, уяв ячĕпе сире! Эпир сире çирĕп сывлăх, чăтăмлăх, çемьере ăнлану, ĕçре ăнăçлăхсем сунатпăр!

**Д.ТЯМАЕВА.**

# Пĕлтерӳсем

**Сутатпăр:**

*М-2140 АЗЛК автомашина, васкавлă. Телефон: 5-22-79.*

* * *

*Касса аппарачĕ. Телефон: 2-20-16.*

* * *

*Мĕнпур енчен хăтлă 2 пӳлĕмлĕ хваттер, 6 м лоджи, тĕплĕ юсав кирлĕ мар. Адрес: М.Джалиль урамĕ, 31 е ГАИ, автосервис.*

* * *

*"Альянс" магазин (апат-çимĕç сутакан пасар), "Елена" магазин (промышленность таварĕсем сутакан пасар) "Орск" холодильниксем йӳнĕ хакпа, гаранти, тӳлевсĕрех леçсе параççĕ. Телефон: 5-41-19. Свидетельство Б-621.*

* * *

*"Ауди-80". Телефон: 2-14-30.*

**Тĕрли:**

*Пĕр е икĕ пӳлĕмлĕ хваттер туянатăп. Сахăр завочĕпе чугун çул поселокĕсене сĕнмелле мар. Адрес: Заводская урамĕ, 23-5.*

* * *

*Универмаг çуртĕнче "Автохими" уйрăмĕ уçăлнă. Кăмăл пуррисене пырса курма сĕнетпĕр.*

*Свидетельство номерĕ 431, лицензи - В 022447.*

* * *

*Атă-пушмак юсатăп (уйрăм предприниматель Татаринов) гаранти. Яланхи клиентсене 20 процент йӳнĕрех, киле леçсе паратăп. Адрес: Гиматдинов урамĕ, машинăсем туса кăларакан завод, 9 сехетрен пуçласа 17 сехетчен. Лицензи номерĕ 022152.*

* * *

*Турă лаша çухалнă, çамки çинче шурă пăнчă, хӳрине каснă. Пĕлекенсене Пухтел ялĕнчи Владимир Ефимова пĕлтерме ыйтатпăр, парне пулать.*

* * *

*Хĕрлĕ тĕслĕ çулталăкри тиха çухалнă. Гагарин урамĕнчи 8-мĕш номерлĕ çуртри 8-мĕш хваттерте пурăнакан Зиганшинсене пĕлтермелле.*

* * *

*Уйрăм стоматологи кабинечĕ. Сиплет тата протез лартать. Хаксем 1996 çулхисем. Пахалăх шанчăклă. 5-33-89 номерпе çырăнмалла. Адрес: Гиматдинов урамĕ 112, НРСУ профилакторийĕ. АА 0342 номерлĕ лицензи.*

* * *

*Мордовири Кадошкино поселокĕнчи çурта сутатпăр е улăштаратпăр. 1988 çулта туса кăларнă ВАЗ-21047 автомашина, сахăр заводĕнче дача сутатпăр. Телефон: 5-33-89 (ĕçри).*

*Ăшă сечĕсен Нурлатри предприятине ĕçлеме васкавлă кирлĕ: квалификациллĕ сварщиксем, слесарь-сантехниксем. Штат расписанийĕпе тӳлеççĕ. Гагарин урамĕнчи 7-мĕш номерлĕ çуртра е 2-15-54 номерлĕ телефонпа ыйтса пĕлмелле.*

*Администраци.*

*Лениногорск хулинчи вĕренӳ центрĕ 1998 çулхи октябрĕн 5-мĕшĕнчен вĕрентме пуçлать:*

*1. Пăспа вĕри шыв трубопровочĕсене пăхса тăракан рабочисем.*

*2. Котельнăй операторĕ.*

*3. Пăспа вĕри шыв трубопроводĕсене шăратса çыпăçтаракансем.*

*4. Газопроводсене шăратса çыпăçтаракан газосварщик.*

*5. Газопроводсене шăратса çыпăçтаракан электросварщик.*

*6. Промышленность предприятийĕсенчи энергохуçалăхшăн яваплă çынсем.*

*7. Электричествопа техника персоналĕн квалификаци ушкăнне ӳстересси (II-V).*

*8. УЗК дефектоскописчĕ.*

*9. ДВС топливо аппаратурин слесарĕ.*

*10. Делопроизводитель тата кадрсен инспекторĕ (1998 çулхи октябрĕн 12-мĕшĕнчен).*

*11. Хими тишкерĕвĕн лаборанчĕ.*

*12. Стропальщик.*

*13. Лифтер.*

*14. Штукатур-маляр.*

*15. Платник.*

*16. Слесарь-сантехник.*

*Телефонсем: 2-34-45, 2-05-18.*

*Урăх çĕртен килнисене общежитипе тивĕçтереççĕ.*

# Пирĕн патра та араб чĕлхи вĕрентеççĕ

***Акă 10 çул хушши ĕнтĕ Нурлатра араб графикине вĕрентес тĕлĕшпе курс ĕçлет, вăл хăйĕн ĕçне кĕркунне тытăнать. Нурлатра пурăнакансенчен чылайăшĕ кунта пĕлӳ туяннă ĕнтĕ, вĕсем пурте курс йĕркелекен И.Давлетшина тав тăваççĕ.***

***- Кăçал та курс ĕçлĕши? - чылайăшне кăсăклантаракан çак ыйтăва эпир Давлетшина патăмăр.***

**- Ибрагим пичче, сирĕн курсăр пĕрремĕш кунранах тӳлевсĕр ĕçлени паллă ĕнтĕ, эсир те нимĕнле тӳлев те илместĕр. Кунта çӳрекенсене, чи малтан, тӳлевсĕр вĕрентни илĕртмест-ши? Эсир хăвăр çакăн пирки мĕн шутлатăр?**

- Çук, вăл кăмăл пуррисене пурне те пĕлӳ туянма май парать. Хальхи, экономика енчен йывăр условисенче, çемье бюджетĕнчен çак тĕллевсемшĕн укçа уйăрма ансатах мар пулнă пулĕччĕ. Пирĕн патра вĕренекенсем хушшинче тĕрлĕ çулсенчи çынсем, çав шутра шкулсенче вĕренекенсем те, ваттисем те.

**- Занятисем иртернĕ чухне эсир çак уйрăмлăхсене шута илетĕр-и?**

- Паллах. Çамрăксем ваттисенчен маларах ăнланаççĕ, çавăнпа та ватăсемпе уйрăм ĕçлеме, хушма меслетсемпе усă курма тӳр килет. Вĕсен интересĕсем ан пĕтчĕр тесе вĕсене хадиссем ăнлантаратпăр, чи кирлĕ кĕлесене вĕрентетпĕр. Шкулсенче вĕренекенсене илес пулсан, вĕсем пурне те питĕ хăвăрт вĕренеççĕ, асра тытаççĕ.

**- Сирĕн курсра икĕ çул вĕренмелле. Пуçламăш пĕлӳ туянма çак вăхăт çителĕклĕ-и?**

- Пĕрремĕш çул вĕреннĕ чухне (октябрь уйăхĕнчен тытăнса март уйăхĕччен) занятисем эрнере икшер сехет пулаççĕ. Çак вăхăтра ваттисем те, çамрăккисем те араб саспаллисене, уйрăм сăмахсем тата предложенисем çырма, вулама вĕренеççĕ. Иккĕмĕш çул вата çынсем Коранри кĕлĕсене тĕрĕс вулама хăнăхаççĕ, ачасем хушма литература вулаççĕ, хăш-пĕр кĕлĕсене вĕренеççĕ.

**- Апла пулсан, эсир ачасене намаз, тĕн догмачĕсене вĕрентес тĕллев лартмастăр-и?**

- Çавăн пек çул-йĕрпе ĕçлесен, ку курс мар, медресе шутланнă пулĕччĕ, çавăнпа пĕрлех требованисем те ӳснĕ пулĕччĕç, анчах та эпир хамăр çине çавăн пек пысăк задача илме пултараймастпăр.

**- Ибрагим пичче, хальхи вăхăт çинчен калаçар-ха. Кăçал занятисене малалла илсе пырăр-и?**

- Çапла. Октябрĕн 4-мĕшĕнче пĕрремĕш заняти иртерме шутлатпăр. Кăмăл пуррисене чукун çул поселокĕнчи мечĕтре кĕтетпĕр.

**- Эсир наука хушнипе ĕçлетĕр е тĕн догмачĕсене (тĕп вĕрентĕвне ним хирĕçлемесĕр ĕненӳпе çеç йышăнни) пурнăçлатăр?**

- Наука та, тĕн те пĕлӳ туяннине ырлаççĕ çеç. Мухаммед пророк çапла каланă: вулама, çырма вĕренес тесен Китая та çитме пулать. Хамăр патра пĕлӳ туянма май пур чухне вара мĕншĕн-ха усă курмалла мар.

**- Ибрагим пичче, калаçушăн тавтапуç. Сире хăвăрăн пархатарлă та усăллă ĕçĕрте ăнăçлăхсем сунатпăр.**

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Л.Р.ФЕДОРОВА.


Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4055